# ХУРĂН

Пыраттăм уйпа ир çинче,
Сасартăк тĕл пултăм пĕр хурăн
Короча хули сăртĕнче:
Ларать вăл пĕчченçĕ, шап-шурă.

Вăл курнă нумай çапăçу,
Вăл курнă хăватлă атака.
Ахаль-и исленнĕ çак çул, —
Вăл пулнă яка та тап-такăр.

Чун туртнă калавĕ пур пек
Силленчĕ, хумханчĕ ват хурăн.
Гвардеец-танкист юнĕпе
Пĕвеннĕ мухтавлă çак вырăн.

Сив чир-и тытать тĕнчене,
Çилсем-и юри варкăштарнă, —
Шавланă танксем сăрт çинче,
Пĕри те, тепри те хăпарнă.

Пĕр танкĕ ват хурăн умне
Хăна пек тăп тăнă маттуррăн,
Юра та, çĕре те бронне
Чĕтретнĕ кĕрлевлĕ моторĕ.

Çĕкленĕ люкне лейтенант,
Çанталăк тăмансăр, яр уçă
Унта та, кунта та йăлт-ялт
Пĕр сикнĕ, пĕр сӳннĕ вут куçĕ.

Сип-сивĕ таса пĕлĕтре
Ялтранă пин çăлтăр, пĕр уйăх.
Мерчен сапнă пек шевлере
Ир умĕн лăпланнă Курск уйĕ.

Çил вĕрнĕ, çӳренĕ сăртра.
Силленнĕ пĕччençĕ ват хурăн.
Пас тытнă, шăпланнă танкра
Кăшт сивĕ, çӳçеннĕ çан-çурăм.

— Вун тăххăр тултартăм паян, —
Калаçнă хуллен те ачашшăн
Гвардеец герой-лейтенант, —
Итленĕ ăна экипажĕ.

— Миçе çул иртсен те, вара
Епле-ха киле эп манатăп...
Çĕршывăм инçе, катара
Пăрланнă сип-симĕс ман Атăл.

Kaç та çĕр сĕнкмесĕр куçне
Кĕтет-çке аннеçĕм мăнтарăн.
Хăй ӳстернĕ тăван ачине
Тытать чĕринче вăл тарăн.

— Юман пек тĕреклĕ кĕреш,
Юратнă кĕрешĕм — ман ывăл,
Хăюллă та вирлĕ кĕреш,
Анчах та, хĕвелĕм, юл сывă!

Çапла тет аннемĕр канашĕ,
Çапла вĕт, тусăм, экипажăм!..